Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать

24 (8090) № ✻ Шӑмат кун, 2013 ҫулхи ака (апрель) уйӑхӗн 6-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

## Пуҫаруллисем малаллах пӑхаҫҫӗ

*Предпринимательство ӗҫӗ пуҫарулӑха тата пултарулӑха ҫирӗп тӗрӗслет. Ҫынсен ыйтӑвне туллин тивӗҫтерекенни вара ырӑ тӗслӗх кӑтартса малаллах утать. Акӑ Д. Романов уйрӑм предприниматель пластик чӳречесемпе тивӗҫтерес рынокра Муркашра пуҫаруҫӑ пулчӗ. Халӗ вара вӑл ертсе пыракан ушкӑн районпа республикӑра кӑна мар, ытти тӑрӑхра та ӑнӑҫлӑ ӗҫлет. Сӑн ӳкерчӗкре эсир пысӑк пахалӑхлӑ пластик чӳречесем лартакан М. Романов, В. Григорьев, А. Морозов ӗҫченсене куратӑр. Вӗсем халӗ Муркаш салинчи Парковая урамри 24 хваттерлӗ виҫӗ хутлӑ ҫӗнӗ ҫуртра тимлеҫҫӗ. Унсӑр пуҫне уйрӑм ҫынсен ыйтӑвне те туллин тивӗҫтереҫҫӗ. Хакӗ ытти ҫӗртисенчен пӗчӗк тата пахалӑхӗ пысӑк пулнипе STAR кантӑка кӑмӑллакан питӗ йышлӑ.*

**Р. ИЛЛАРИОНОВА** сӑн ӳкерчӗкӗ.

Пӗчӗк бизнес



## Пай ҫӗрӗ кирлӗ мар пулсан, унпа мӗн тумалла?

Ҫивӗч ыйту

***Пай ҫӗрӗсене харпӑрлӑха куҫарас ӗҫӗн тапхӑрӗ вӗҫленсе пырать. Ҫынсем вара пурпӗр ку енӗне татӑклӑ утӑм тӑвайман-ха, тен вӗсем ку ӗҫе ӑнланмаҫҫӗ, вӑхӑт вара пире кӗтмест. Саккун ҫакна тивӗҫлӗ шайра вӗҫлеме хушать. Ҫавна май черетлӗ калаҫӑва эпӗ район администрацийӗн пурлӑх пайӗн ертӳҫине И. ЗАХАРОВА чӗнтӗм.***

– Район администрацийӗ хуҫисем кирлӗ мар тесе палӑртнӑ пай ҫӗрӗсем тӗлӗшпе ҫынсене, тӗрӗсрех каласан ҫӗр хуҫисене, ӑнлануллӑрах пулма ыйтать. Хальхи вӑхӑтра ял тӑрӑхӗсем ҫӳлерех асӑннӑ категори пай ҫӗрӗсемпе ӗҫлеҫҫӗ, вӗсене муниципаллӑ харпӑрлӑха куҫарассипе тимлеҫҫӗ.

«Ял хуҫалӑх пӗлтерӗшлӗ ҫӗре ҫаврӑнӑша кӗртесси ҫинчен» Федераллӑ Саккунпа килӗшуллӗн пай ҫӗрӗсене муниципаллӑ харпӑрлӑха куҫарассине икӗ мелпе пурнӑҫламалла. Пӗрремӗшӗ вӑл – пай ҫӗрсен хуҫисен ҫав лаптӑксене хӑйсен харпӑрлӑхне куҫарасси. Тепӗр саманчӗ – енчен те ҫын пай ҫӗр кирлӗ мар тесе шутлать пулсан, унӑн пай ҫӗрӗнчен хӑтӑлмалла, ҫак ӗҫе саккунпа килӗшуллӗн тумалла.

Ҫапла вара ҫак кунсенчех пай ҫӗрсен хуҫисемпе татах та тачӑрах ӗҫлемелле. Ҫынсен регпалатӑна хӑйсен кайса заявлени ҫырмалла. Вӗсене ҫӑмӑллӑх кӳрес тесе, ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсем йӗркеленипе регпалата ӗҫченӗсем ял тӑрӑхӗсенче халӑха йышӑнаҫҫӗ. Ҫапла вара ҫынсем вырӑнтах ҫӳлерех асӑннӑ заявление ҫырма пултараҫҫӗ. Йышӑну кунне, вӑхӑтне ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсем йӗркелеҫҫӗ, ҫынсене малтарахах пӗлтереҫҫӗ. Унта вӗсем пай ҫӗрӗ кирлӗ маррине татӑклӑн палӑртаҫҫӗ. Ҫакӑн пек чухне ҫӗр лаптӑкӗ ял тӑрӑхӗн харпӑрлӑхне куҫать. Ку вӑл тӳлевсӗр тата ансат мел шутланать. Ҫавӑнпа та ҫынсен ял тӑрӑхӗсемпе сыхӑнмалла.

Тепӗр ҫул-йӗр вара кӑткӑсрах. Ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ ял тӑрӑхӗнчи ҫакӑн пек темиҫе ҫул усӑ курмасӑр выртакан ҫӗр лаптӑкӗсемпе никам та усӑ курманнине ӑнлантарать, ҫирӗплетет. Ҫапла вара вӑл пай ҫӗрӗсене ял тӑрӑхӗ ҫине куҫарма ыйтса район судне иск тӑратать. Пай ҫӗрне регистрацилессине хӑй ҫине илет. Анчах та Раҫҫей Федерацийӗн Налук кодексӗпе килӗшуллӗн иккӗмӗш мелпе суйласа илекен ҫынсене 200 тенкӗ чухлӗ патшалӑх пошлини тӳлеттереҫҫӗ. Район шайӗнче миҫе ӗҫ пӑхса тухмаллине шутласан вара ҫакӑ питӗ пысӑк калӑпӑш.

Паянхи кун тӗлне Муркаш район сучӗ иккӗмӗш мел суйласа илнӗ граждансен заявленийӗсемпе ӗҫлет, анчах та вӗсен йышӗ питӗ нумай. Ҫапла вара вӑхӑта тата халӑх укҫине перекетлес тӗлӗшпе район администрацийӗ ҫынсене ӑнлануллӑрах пулма ыйтать. Кирлӗ мар тесе палӑртнӑ пай ҫӗрӗсен хуҫисен спискине кӗртнӗ ҫынсене ял тӑрӑхӗсен администрацийӗсене пырса заявлени ҫырма сӗнет. Ҫак ӗҫе пурнӑҫлама хӑвӑрпа пӗрле паспорт тата пай ҫӗрӗн свидетельстви кирлӗ, ытти ӗҫе вара ял тӑрӑхӗсен ӗҫченӗсем пурнӑҫлаҫҫӗ.

Ҫавӑн пекех сак саманта та ӑнланма ыйтатпӑр. Пай ҫӗрӗсене муниципаллӑ харпӑрлӑха куҫарасси – саккун хушӑвӗ. Ҫакна туллин пурнӑҫласан ял тӑрӑхӗсен тӳрӗ тивӗҫӗ тата сирӗн ӑнланулӑх. Хамӑр тӑрӑхри пурлӑхпа-пуянлӑхпа тӗллевлӗ усӑ курар. Ҫӗр пире тӑрантаракан пулнине манар мар, ӑна мӗн авалтанах хаклама пӗлнӗ, ҫак ӗҫе эпир те тивӗҫлӗ шайра тӑвар.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА** калаҫнӑ.

## Ҫурхи ӗҫсене вунӑ кунта вӗҫлемелле

Видеоконференци

**Апрелӗн 4-мӗшӗнче республика Пуҫлӑхӗ М. Игнатьев муниципаллӑ районсемпе хула округӗсен пуҫлӑхӗсемпе видеоконференци ирттернӗ. Сӑмах ҫурхи уй-хир ӗҫӗсене ирттерме хатӗрленесси, пурӑнмалли ҫурт-йӗр хута ярассипе 2013 ҫулхи пӗрремӗш квартал планӗсене пурнӑҫласси пирки пынӑ. Видеоконференци ӗҫне район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Р. Тимофеев та хутшӑннӑ.**

**ЧР Министрсен Кабинечӗн Председателӗн ҫумӗ – ял хуҫалӑх министрӗ С. Павлов республикӑра ҫурхи уй-хир ӗҫӗсене ирттерме хатӗрленесси мӗнле пынипе паллаштарнӑ. Вӑл палӑртнӑ тӑрӑх 2013 ҫулта пӗтӗмӗшле ака лаптӑкӗ 568,7 пин гектарпа танлашмалла. 2012 ҫулхипе танлаштарсан ку вӑл 104,5 процент пулать. Ҫавӑн пекех Сергей Владимирович ҫурхи культурӑсен вӑрлӑхӗсен, ҫунтармалли-сӗрмелли материалсен, минераллӑ удобренисен ҫителӗклӗхӗн, машинӑпа техника паркне ответлӑ тапхӑра хатӗрлесе ҫитересси ыйтӑвӗсем ҫинче те чарӑнса тӑнӑ.**

**Ҫурхи уй-хир ӗҫӗсене туса ирттерме кӑҫал 1457,9 миллион тенкӗ кирлӗ пулать. Вӑл шутран 750 миллион тенкӗ кредит укҫи-тенкипе усӑ курма пӑхнӑ.**

**2013 ҫулта уй-хир ӗҫӗсене хатӗрленсе йӗркеллӗ ирттерессипе ҫыхӑннӑ ыйтусене оперативлӑ татса пама ятарлӑ штаб йӗркеленӗ. Ун йышне министерствӑсен, предприятисемпе организацисен представителӗсене кӗртнӗ.**

**Ял ӗҫченӗ умӗнче вара ҫакӑн пек задача тӑрать – ҫурхи уй-хир ӗҫӗсене 10 кун хушшинче туса ирттермелле.**

**Ҫур акине хатӗрленесси мӗнле шайра пулнипе муниципаллӑ районсен администрацийӗсен пуҫлӑхӗсем паллаштарнӑ. Район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Р. Тимофеев видеоконференцире пӗлтернӗ тӑрӑх, кӗрхи культурӑсене те шутласан ака лаптӑкӗ 2013 ҫулта ял хуҫалӑх предприятийӗсемпе хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсенче 25,03 пин гектар йышӑнмалла. Ку вӑл иртнӗ ҫулхи шайрах.**

**Пӗлтӗр кӗрхи культурӑсене 4347 гектар акса хӑварнӑ пулнӑ. Вӗсем япӑх мар хӗл каҫнӑ.**

**Ҫур аки ӗҫӗсене кӑҫал 13,8 пин гектар лаптӑк ҫинче туса ирттермелле. Ҫурхи тӗш тырӑпа пӑрҫа йышши культурӑсен 10,7 пин гектар, ҫӗр улми 1000 гектар, пахча ҫимӗҫ 63 гектар, пӗр ҫул ӳсекен курӑксем 1566 гектар, кукуруза 373 гектар акса-лартса хӑварма пӑхнӑ. Нумай ҫул ӳсекен курӑксене 6,6 пин гектар ҫинче минераллӑ удобренисемпе апатлантармалла тата сӳремелле.**

**Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ Муркашсем ҫурхи ака-суха ӗҫӗсене вӑхӑтра тата пахалӑхлӑ туса ирттерессе, кӑтартусем япӑх мар пуласса шанса тӑнине пӗлтернӗ.**

**«Уй-хире пахалӑхлӑ кондициллӗ вӑрлӑх акса хӑварассине уйрӑмах ҫине тӑрас пулать», – ҫапла чӗнсе каланӑ район администрацийӗсен пуҫлӑхӗсене Михаил Игнатьев.**

Хамӑр инф.

Республикӑра

## Пӗтӗм халӑх уявӗ

Аслӑ Ҫӗнтерӳ тунӑранпа кӑҫал 68 ҫул ҫитет. Унччен вара пӗр уйӑх кӑна юлчӗ темелле. Шупашкарта Чӑваш Ен Правительствин пуҫлӑхӗ Иван Моторин ертсе пынипе пуриншӗн те питех те пысӑк пӗлтерӗшлӗ ҫак уява хатӗрленсе ирттерессин ыйтӑвӗсемпе ӗҫ ушкӑнӗн ларӑвӗ иртнӗ.

Яланхи пекех тӗп событисем майӑн 8 – 9-мӗшӗсенче иртмелле. Ун пирки культура министрӗ Вадим Ефимов каласа панӑ. Ветерансене чысласси ҫыхӑннӑ мероприятисемпе акцисене вара республикӑра ҫак кунсенчех ирттерме тытӑнма пӑхнӑ.

Паллӑ ӗнтӗ, уяв центрӗ Шупашкар пулса тӑрать. Хула пуҫлӑхӗ Леонид Черкесов пӗлтернӗ тӑрӑх ятарласа йӗркеленӗ комитет хатӗрленӳ ӗҫӗсене тытӑннӑ ӗнтӗ. Ҫавӑн пекех вӑл уяв мероприятийӗсем мӗнле йӗркепе иртесси ҫинче чарӑнса тӑнӑ.

## Сайтра – «хӗрӳ лини»

Мартӑн 29-мӗшӗнче Чӑваш Енӗн Сывлӑх сыхлавӗпе социаллӑ аталану министерствин сайтӗнче medicin-help@cap.ru «хӗрӳ лини» ӗҫлеме тытӑнчӗ. Ҫак электронлӑ адреспа ыр кӑмӑллӑх фончӗсем, республикӑра пурӑнакансем йывӑр чирсемпе асапланакансен сиплевне пуҫличчен маларах ыйтупа тухма пултараҫҫӗ. Практика кӑтартса панӑ тӑрӑх чылай тӗслӗхре медицина пулӑшӑвне бюджетран саплаштарнипе тӳлевсӗрех тивӗҫме пулать.

Раҫҫей шайӗнчи министерство сайтӗнче кун пек лини февральтенпе ӗҫлет. В. Скворцова министр палӑртнӑ тӑрӑх «хӗрӳ лини» ӗҫлеме пуҫланӑранпа 43 ҫын пулӑшу илнӗ. Адреспа ҫитнӗ ыйтусене 3–14 кунра пӑхса тухаҫҫӗ.

РФ Правительстви ҫумӗнчи канаш ларӑвӗнче сывлӑх сыхлавӗпе социаллӑ аталану министрӗ В. Скворцова ку тӗлӗшпе ӗҫ ушкӑнне йӗркелессине пӗлтернӗ, унта ыр кӑмӑллӑх фончӗн представителӗсем кӗресси те паллӑ. Ҫапла майпа ыр кӑмӑллӑх фончӗсем, социаллӑ пӗлтерӗшлӗ ӗҫ-хӗл суйласа илнӗ коммерциллӗ мар организацисем тата влаҫ органӗсем хушшинчи ҫыхӑнӑва тачӑрах йӗркелеме шухӑшлаҫҫӗ.

Кӗскен

## Пенсисем ӳсрӗҫ

Апрелӗн 1-мӗшӗнчен тытӑнса пур йышши пенсисемпе федераллӑ ҫӑмӑллӑхсемпе усӑ куракансене паракан тӳлев виҫисем ӳсрӗҫ. Ку вӑл кӑҫал иккӗмӗш хут. Пӗрремӗш хут пенсисене февралӗн 1-мӗшӗнчен тытӑнса индексациленӗччӗ. Ҫапла вара апрельтенпе ӗҫ пенсийӗсене 3,3 процент, социаллӑ пенсисене 1,81 процент, федераллӑ ҫӑмӑллӑхсемпе усӑ куракансене уйӑхсерен паракан укҫа тӳлевне тата соцпакета 5,5 процент пысӑклатнӑ. Тӗплӗнрех – хаҫатӑн ҫитес номерӗнче.

Саламлатпӑр



Юратнӑ та хаклӑ аннене, кукамая – Анаткас Хачӑк ялӗнче пурӑнакан **Римма Алексеевна СТЕПАНОВӐНА** апрелӗн 7-мӗшӗнче ҫуралнӑ кунӗ ячӗпе саламлатпӑр. Утас ҫулу санӑн вӑрӑм та такӑр пултӑр, Турри вӑй-хал парса тӑтӑр, чирчӗртен упратӑр. Малашне те ачӑрсемпе, мӑнуксемпе, тӑвансемпе савӑнса та килӗштерсе пурӑнма ҫирӗп сывлӑх сунатпӑр. Пире пулӑшса тӑнӑшӑн, ҫемье ӑшшине упраса пурӑннӑшӑн чӗререн тав тӑватпӑр. Эсӗ пурри пирӗншӗн – пысӑк телей, савӑнӑҫ. Эпир сана юрататпӑр, санпа мухтанатпӑр.

**Саламлаканӗсем: ывӑлӗсемпе хӗрӗсем, кӗрӳшӗсем, мӑнукӗсем тата сывӑх тӑванӗсем.**

Пирӗн юратнӑ та хаклӑ аппана – Ҫурлатри ялӗнче пурӑнакан **Валерия Ивановна КАЗӐМБАЕВӐНА** 70 ҫулхи сумлӑ юбилей ячӗпе чун-чӗререн ӑшшӑн саламлатпӑр. Тумхахсӑр кун-ҫул, ҫирӗп сывлӑх, телей, вӑрӑм ӗмӗр сунатпӑр. Ачӑрсемпе, мӑнуксемпе, тӑвансемпе савӑнса, килӗштерсе пурӑнмалла пултӑр. Эпир сана юрататпӑр, хисеплетпӗр, эс пурришӗн савӑнатпӑр.

**Саламлпа Макаровсен ҫемйи.**

Ҫырӑнтару – 2013

## Июльтен илсе тӑма

**«Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫата иккӗмӗш ҫур ҫулта илсе тӑма малалла ҫырӑнтараҫҫӗ.**

**Апрелӗн 1-мӗшӗнчен хаҫата ултӑ уйӑха ҫырӑнмалли хак – 216 тенкӗ те 30 пус.**

**Хаклӑ вулаканӑм! Малашне те пӗрле пулар!**

# Кирек епле ыйтупа та йышăнаççĕ

**Налук тӳлекенсене пĕлме**

***Нумаях пулмасть Федераллă налук службин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцине (вăл Етĕрнере вырнаçнăччĕ, Муркаш районĕ те унта кĕнĕччĕ) Çĕмĕрлери районсем хушшинчи 8-мĕш номерлĕ налук инспекцийĕпе пĕрлештерчĕç. Адресĕ: 429122, Çĕмĕрле хули, Октябрьская урам, 20 а çурт. Çĕнĕлĕхпе çыхăннă улшăнусем пирки налук инспекцийĕн пуçлăхĕ, Раççей Федерацийĕн патшалăх гражданла службин 3-мĕш класлă советникĕ Татьяна ТАРАНОВА каласа пама кăмăл турĕ:***

– Муркаш районĕнчи налук тӳлекенсене çавна пĕлтерес тетĕп. Раççей Федераллă налук службин 2012 çулхи октябрĕн 18-мĕшĕнчи ММВ-7-4/755 № «Федераллă налук службин Чăваш Республикинчи управленийĕн структури çинчен» хушăвĕпе килĕшӳллĕн федераллă налук службин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцине реорганизациленĕ, ăна федераллă налук службин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 8-мĕш номерлĕ инспекцийĕпе пĕрлештернĕ.

Çапла вара федераллă налук службин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕ ТОРМ (территориально-обособленное рабочее место) пулса тăчĕ. Налук инспекцийĕн ĕçченĕсем налук тӳлекенсене унта йышăнма пăрахман.

Муркашри ТОРМ-ра специалист патне пырса ИНН илме, бюджет умĕнче парăм пурри е çукки пирки справка илме, уйрăм предпринимательсен пĕрлехи патшалăх реестрĕнчен (ЕГРИП), юридици вăйĕнчи çынсен пĕрлехи патшалăх реестрĕнчен (ЕГРЮЛ) выписка илме е справка илме заявлени пама пулать. Справкăсем расчет счечĕсем пурри е çукки пирки пулма пултараççĕ, уйрăм çынна харпăр хăй ĕçне пуçăнакан предпринимателе патшалăх регистрацине тăма, тĕрĕслевпе касса машинине регистрацилеме документсем йышăнаççĕ. Асăннă документсене хатĕрлесе панă хыççăн эсир кирлĕ документсене Муркашрах илме пултаратăр, Çĕмĕрле хулине каймалла пулмасть.

Çавăн пек те пулма пултарать. Енчен те эсир пурлăхшăн, çĕршĕн е транспорт хатĕрĕшĕн налук тӳлемелли пирки уведомлени илмерĕр пулсан, налук тӳлемелли пирки панă документра тĕрĕсмарлăхсем тупса палăртрăр пулсан, пирĕн специалист сирĕн ыйтăвăра вырăнта Муркашрах татса пама пултарать. Специалист даннăйсене бюджетпа танлаштарать, тӳлесе татман суммăсене палăртать, налук тӳлемелли тӳлев документчĕсене хатĕрлесе парать.

Кашни тунти кун 13 сехет те 30 минутран тытăнса 15 сехет те 30 минутчен Муркашри ТОРМ-ра граждансене хăйсене интереслентерекен ыйтусемпе федераллă налук службин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 8-мĕш номерлĕ инспекцийĕн пуçлăхĕ Татьяна Викторовна Таранова е унăн çумĕ йышăнать.

Интереслентерекен пур ыйтусемпе те налук инспекцине çак адреспа пыма пулать: Чăваш Республики, Çĕмĕрле хули, Октябрьская урам, 20 а çурт. Приемнăй телефонĕ: 8 (83536)2-33-43; налук тӳлекенсене регистрацилекен, учета илекен тата вĕсемпе ĕçлекен пай: 8 (83536)2-36-55; камераллă тĕрĕслевсен пайĕ: 8 (83536) 2-26-03; аналитика пайĕ (парăмсене йĕркелесси) 8 (83536)2-18-60.

**Налук инспекцийĕн Муркашри ТОРМ адресĕ çапла: Муркаш ялĕ, Гагарин урамĕ, 4-мĕш çурт, телефон: 8(83541) 6-24-52.**

# «Путене» республикăра палăрчĕ




***Шкул çулне çитмен ачасен пултарулăхĕпе тĕпчев ăсталăхне аталантарас тĕллевпе Пĕтĕм Раççейри «Эпĕ – тĕпчевçĕ» конкурса йĕркеленĕ. Вăл тĕрлĕ тапхăрпа (район, регион, çĕр-шыв) пĕрремĕш хут кăна иртмест ĕнтĕ.***

***«Путене» ача-пăча садне çӳрекен аслă ушкăнри ачасем те кăçал çак конкурсăн республика шайĕнчи тапхăрне хутшăнма тивĕçрĕç. «Умка» ушкăнри Надежда Кириллова, Арина Вязова тата Эвелина Голубева Н. Порфирьева тата Т. Толстова воспитательсем пулăшнипе «Тĕлĕнмелле напиток – кока-кола», Н. Алексеева тата Н. Аксендарова воспитательсем ертсе пынипе «Пчелки» ушкăнри Анастасия Данилова «Мĕнле тĕлĕнмелле хӳре ку?» темăсемпе irттерни тĕпчев ĕçĕсене хӳтĕлерĕç. Анастасия Данилова 1-мĕш вырăн йышăнма пултарчĕ, «Умка» ушкăнри хĕр ачасем 2-мĕш пулчĕç. Парнесемпе дипломсем тата медальсем илме тивĕç пулнăшăн ачасем питĕ савăнчĕç.***

**Н. ПОРФИРЬЕВА воспитатель.**

# Турă Амăшне ырă хыпар калани (Благовещение)

Апрелĕн 7-мĕшĕнче эпир Архангел Гавриил Таса Хĕр Марияна ырă хыпар каланине асăнса праçник тăватпăр. Турă Ангелĕ курăнса Марияна каланă: «Эй, тивлетлĕ Хĕр, савăн, Санпала Турă, Эсĕ пур хĕрарăмсенчен те мухтавлă», – тенĕ. Ангел сăмахĕсене илтсен Таса Хĕр тĕлĕнсе хăраса кайнă. Ангел вара ăна каланă: «Ан хăра, Мария. Эсĕ Туррăн тивлетне тупрăн; акă Эсĕ йывăр çын пулса Ывăл Ача çуратăн, Ăна Иисус тесе ят хурăн». Мария Архангел сăмахĕсенчен тĕлĕнсе унран ыйтнă: «Вăл ĕç епле пулĕ? Манăн упăшкам çук-çке», – тенĕ. Ангел ăна хирĕç каланă: «Сан çине Святой Сывлăш анĕ, Сана çӳлти Туррăн хăвачĕ витсе тăрĕ, çавăнпа çуралас Ачана та Турă Ывăлĕ тесе калĕç», – тенĕ. Таса Хĕр Мария Туррăн ирĕкне йышăнса каланă: «Эпĕ Туррăн чури, эсĕ каланă пек пултăр»,– тенĕ.

Çапла Таса Хĕр Мария хăйĕнчен Çăлакан çураласси çинчен Ангелтан ырă хыпар илнĕ. Çавăнтан вара Унăн ăшĕнче ӳтсĕр Турă ӳтленнĕ. Пирĕншĕн, пире çăлма Турă Ывăлĕ çĕр çине Таса Хĕр Марияран çуралса килме кăмăл тунă. Çак кунтан эпир çăлăнасси пуçланса кайнă. Атте Турă Хăйĕн пĕртен-пĕр Ывăлне çĕр çине этем йăхне çăлма янă.

Çак Туррăн аслă ĕçне асăнса пирĕн пĕтĕм чунтан савăнса Таса Хĕр Марияна мухтас пулать. Вăл хăйĕн йăвашлăхĕпе, таса пурнăçĕпе пирĕн Христос Туррăмăрăн Амăшĕ пулма тивĕçлĕ пулнă. Вăл Херувимсенчен те аслă, Серафимсенчен те мухтавлă. Вăл Çăлакана çуратнă, Ăна хăй кăкăрĕпе ĕмĕртсе ӳстернĕ. Вăл пирĕн Турă Амăшĕ пулать. Ăна яланах кĕлтăвар: «Эй, Турра çуратнă Хĕр, эпир çылăхăмăрсем нумайран Турра йăлăнма хăяймастпăр, Хăвăнтан çуралнине Ху тархасла: амăшĕ кĕлтуни Патшанăн кăмăлне çаврĕ. Çылăхлă çынсенĕн кĕллине ан хăвар, таса Турă Амăшĕ, Вăл, пирĕншĕн хурлăх курма кăмăл тунăскер, çăлĕ Пире, Вăл ырă кăмăллă»,– тейер.

**Йӳçкассинчи чиркӳ настоятелĕ Сергий атте.**

# Туберкулез çинчен мĕн пĕлмелле?

**Туберкулез çын организмĕн нихăш органне те уйăрса тăмасть, пурне те пĕтерме пултарать. Ытларах чух вара ӳпке сиенленет. Пирĕнпе çак хăрушă чир пирки каласа пама туберкулеза хирĕç кĕрешекен республкăри диспансерăн тĕп врачĕн çумĕ Л. АФАНАСЬЕВА кăмăл турĕ.**

– Туберкулез – ерекен чир. Кашни çыннăнах çак инфекцие ертес хăрушлăх пур. Чире пуçарса яракан микроб питĕ чăтăмлă: спиртран та, сивĕрен те хăрамасть. Тĕслĕхрен, тусанра 3 уйăх таран, нӳрĕ хуралтăра çулталăкĕпех пурăнма пултарать. 25 градус сивĕре те 7 çул хушши вилмесен те пултарать. Çав хушăрах хĕвел пайăркисем ăна 2 сехетрен, ультрафиолет пайăркисем 5–6 сехетре пĕтереççĕ. Кĕске вăхăт вĕретнине те микроб чăтаймасть.

Туберкулеза саракансем – чирлĕ çынсем е выльăхсем, сайра хутра кайăксем те пулма пултараççĕ. Ытларах чухне микробсем çын калаçнă, ӳсĕрнĕ, сунасланă вăхăтра сывлăша пĕчĕк тумламсемпе тухаççĕ. Тусан е тĕрлĕ япала çине лараççĕ. Ӳсĕрнĕ вăхăтра микробсем 2 метр таран, сунасланă чухне 9 метра саланма пултараççĕ.

Сайра хутра туберкулез апат урлă та ерме пултарать: чирлĕ выльăх-чĕрлĕх какайне çисен, сĕтне ĕçсен е тата чирлĕ кайăк-кĕшĕкĕн çăмартисене çисен.

Чирлĕ çыннăн ал шăллийĕпе, чашăк-тирĕкĕпе тата вырăн таврашĕпе усă курсан та чир ерме пултарать. Ытларах чухне нумай вăхăт хушши туберкулезлă çынпа юнашар пулни те чире ярать. Пĕр чирлĕ çын çулталăкра вăтамран 20 ытла çынна чир ертме пултарть. Çавăнпа та чирлĕ çын çемье членĕсене, уйрăмах ачасене туберкулез ертме пултарас хăрушлăх пысăккине асра тытмалла.

**Хăрушсăрлăх**

# Ответлăх туйăмĕ çителĕксĕр

Кулленхи ăнлантару тата асăрхаттару ĕçĕпе пĕрлех çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекторĕсем ятарлă операцисемпе рейдсем, акцисем сахал мар ирттереççĕ. Иртнĕ кунсенче акă пирĕн районта «Урă мар водитель» тата «Тимлĕ пулăр – каникул!» профилактика мероприятийĕсем иртрĕç.

Республикăра çул-йĕр çинче пулса иртекен аварисенче ачасем час-часах суранланаççĕ. Кăçалхи икĕ уйăхра кăна ачасем хутшăннипе пулса иртнĕ инкексене 26 регистрациленĕ. Пирĕн районта вара çулталăк пуçланнăранпа пулнă инкексенчен пĕринче ачан пурнăçĕ татăлнă. (**Ред**.: Атăл – Мăн Сĕнтĕр – Шашкарвăрри çул çинчи инкек пирки хаçатра маларах та пĕлтернĕччĕ.) Çавăнпа та çуркуннехи каникул вăхăтĕнче ачасене çул урлă каçмалли вырăнсенче асăрхаттарасси, ашшĕ-амăшĕсемпе тата ачасемпе тĕл пулса калаçасси, ачасем выляма е ăмăртусене пухăнакан вырăнсем патĕнче çул-йĕр паллисем, транспорт лартмалли вырăнсем мĕнле шайрине тĕрĕслесси профилактика мероприятийĕн тĕп тĕллевĕсем пулчĕç.

Çул-йĕр хăрушсăрлăх патшалăх инспекцийĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕ С. Иванов полици капитанĕ пĕлтернĕ тăрăх «Урă мар водитель» асăрхаттару мероприятийĕ те хăйĕн витĕмĕпе палăрать. Акă март вĕçĕнче иртнĕ акци вăхăтĕнче пирĕн районти çулсем çинче урă мар виçĕ водителе тупса палăртрĕç. Çапла майпа инспекторсем тен шăпах виçĕ инкеке асăрхаттарчĕç те. Паллах, кашни кун çынна ӳсĕрле руль умне лармалла мар тесе «таккаса» тăма никамăн та вăхăт çитмест. Водительсен вара хальлĕхе хăйсен ответлăх туйăмĕ çителĕксĕр. Пĕри йĕркене пăхăнмасан, тепри çул-йĕр правилине пăссан лăпкăрах лару-тăру патне часах çитеймĕпĕр пулĕ.

Ӳсĕрле руль умне ларнипе вара республикăра январь–февраль уйăхĕсенче кăна 12 авари пулса иртнĕ. Çавăнпа та хамăрăн ответлăх пирки тепĕр хут шухăшлани ытлашши мар.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Пирус туртма пăрахар: сиенĕ хăрушă, сăлтавĕсем те нумай

**«Статистика кăтартăвĕсем тăрăх тĕнчере çулсерен вăтамран 4 миллион çын вилет. Кашни пиллĕкмĕш вилĕм вара пирус туртнипе çыхăннă. 1 штук пирус туртни çыннăн 5 минут пурăнмалли вăхăтне «туртса илет», çулталăкра – 31 кун. Апла пулсан кашни пирус туртаканшăн кашни çулталăк 11 уйăхран кăна тăрать темелле. Пĕтĕмĕшле вара пирус туртакан çыннăн пурнăç тăршшĕ 8–10 çула яхăн кĕскелет», – хăрушă фактсемпе паллаштарать районти тĕп больницăри нарколог Лариса Иванова.**

Пĕтĕм тĕнчери сывлăх сыхлав организацийĕ те акă никотина майĕпен вĕлерекен наркотик тесе палăртать. Пĕр штук пирус туртни пĕр апельсинри чухлĕ С витамина пĕтерет. Апла пулсан хăшĕсен кунне сахалтан та 20 апельсин çимелле. Организма никотин çитнипе юн тымарĕсем те пĕрĕнеççĕ. Çавăнпа тĕрлĕ çĕре кислород йĕркеллĕ çитменрен юн тымар чирĕсем, чĕре чирĕсем пуçланаççĕ. Урасем ыратма тытăнни, шăнни те çакăнпа çыхăннине калаççĕ врачсем.

Раççейре вăтамран арçынсен 50–60 проценчĕ пирус туртать, хĕрарăмсем – кашни вуннăмĕшĕ. Туртакансенчен 90 проценчĕ çамрăклах туртма пуçланă. Çак пачах та ырă мар пулăм ачасем ăнăçуллă арçын тĕслĕхне тĕрĕс мар курса, тĕрĕс мар ăнланса çитĕннипе те çыхăннă: урамра та «пысăккисем» пирус туртаççĕ, килте те туртакан çын пур. Пирус туртакан ашшĕ е амăшĕ вара тепĕр чухне ачана алăра çавăтса пынă чухнех тĕтĕм мăкăрлантарса утнине тата мĕнле ăнланмалла? Пирус туртакансем нумай чух вĕсемпе юнашар туртман çынсем пурри çине çаврăнса та пăхмаççĕ-çке.

Пирус туртни – халăхăн сывлăхĕпе, пуласлăхĕпе çыхăннă çивĕч ыйтусенчен пĕри. Çавăнпах ĕнтĕ Патшалăх Думи те пирус туртнине хирĕç кĕрешмелли саккуна кăçал пĕр саслăн тенĕ пекех йышăнчĕ. Унпа килĕшӳллĕн июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Раççейре патшалăх учрежденийĕсенче, аслă шкулсенче, шкулсенче, больницăсенче, стадионсенче, ресторансенче тата ытти обществăлла вырăнсенче пирус туртма юрамасть. Хăш-пĕр депутатсем çак административлă йĕркене пăснăшăн 3 пин тенкĕ чухлĕ штраф памалла тăвас пирки те калаçаççĕ. Пирус туртакансем валли вара ятарлă вырăнсем предприятисемпе офиссенче кăна юлĕç. Кунсăр пуçне саккунра пирус пачкисене сентресем çинчен илмеллине те каланă. Лавккасенче туянакансене курăнмалла пирус пачкисен прейскурантне кăна çакса хума тивĕ. Супермаркетсемпе гипермаркетсенче пирус туянас текенсем валли ятарлă уйрăмсем пулмалла...

Сывлăхлă пулма çăмăлрах мар-и?

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Полици хроникинчен**

# Суту-илӳ ăнман

Анаткасси ялĕнчи пĕр правур арçын ун патне киленкаян хăнасене спирт пур шĕвекпе «сăйланă» иккен. Çамрăкки туяннă-и çак шĕвеке е ватти – пурне те хавас пулнă вăл. Иртнĕ кунсенче вара ун патĕнче пĕр хĕр, паллах, арçын спирт пур шĕвеке сутнине пĕлсе ĕнтĕ, çур литрлине 100 тенкĕпе туяннă. Çак суту-илӳ шăпах полицейскисен умне тухнă та. Малалла та арçын хушма тупăша çак мелпех тăвасшăн пулать-ши?

# Саккунсăр майпа упранă

Хĕç-пăшалпа çыхăннă преступленисем пирки, вăл шутра ăна саккунсăр майпа упрани çинчен те тăтăшах илтетпĕр. Пирĕн районта та акă иртнĕ уйăхра Кашмаш ялĕнче хĕç-пăшала саккунсăр майпа упранине тупса палăртнă: пĕрин авăрĕ – пистолетăн пек, тĕприн – револьвер пек. Çак япаласене кил хуçалăхĕнче 2007 çултанпах упранăмĕн. Ăçта та пулин пăшал пенĕ сас тухнă пулсан вара?

Ку тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă. Ĕçе следстви уçăмлатса парĕ.

**Пичете Шалти ĕçсен министерствин районти полици пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

Апрелĕн 7-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери сывлăх кунĕ

# Юн пусăмĕ пирки мĕн пĕлмелле?



Юн пусăмĕ пысăк пулни – çынсем хушшинче анлă сарăлнă чирсенчен пĕри. Çак чир ўснĕ çынсенчен 40 процентне яхăн пырса тивет. Анчах çакă тўрех алă усмаллине пĕлтермест. Енчен те сирĕн юн пусăмĕ пысăкки палăрчĕ пулсан тăруках хăраса ан ўкĕр. Ку вăл эсир хроникăлла чирлĕ пулнине пĕлтермест. Ан манса кайăр, юн пусăмне контрольлесе тăма пулать.

Сывă çынсен те юн пусăмĕ выляма пултарать. Каннă чух е сывăрнă вăхăтра вăл палăрмаллах пĕчĕккĕ. Пăлханнă чух, йывăр ĕçсене пурнăçласан е пирус туртнă вăхăтра вăл палăрмаллах ўсет. Çакна манса ан кайăр, йĕркеллĕ юн пусăмĕн кирек хăш ўсĕмре те арçын е хĕрарăм пулнине пăхмасăр 140 – 90 миллиметртан пысăк пулмалла мар.

Юн пусăмĕ пысăкки – сывлăхшăн хăрушă чир. Ун хыçĕнче ишеми чирĕпе инсульт тăраççĕ. Юн пусăмĕ ўссен пуç ыратма пуçлать, пуç саврăнать, ыйхă кансĕрленет, куç курни япăхланать, чĕре ыратни палăрать. Çапах та ытларах чухне юн пусăмĕ пысăкланнине пуç ыратни систерет. Çакăнтан асăрханас тесен çынсен юн пусăмне талăкра икĕ хутчен виçни те ырă утăм кăна. Ку ĕçе пурнăçличчен пĕр сехет малтан кофе е çирĕп чей ĕçме, пирус туртма юрамасть. Юн пусăмне виçиччен 5 минут е йывăр ĕç хыççăн 15 – 30 минут лăпкăлăхра лармалла.

Гипертони кризĕ – юн пусăмĕ ăнсăртран виçерен ытла ўссе кайни. Ку вăл – сывлăхшăн питех те сиенлĕ пулăм. Унăн никĕсĕнче йывăр ĕç-хĕл, çанталăк улшăнăвĕ, пирус нумай туртни, эрех ĕçни, сывăрас умĕн тăварлă апат нумай çини, юн пусăмне ўстерме пулăшакан хатĕрсемлĕ апат-çимĕçпе напиткисене ĕçни-çини (кофеин кофере нумай, тирамин – шоколадпа сырта, вăлчара т. ыт. те). Кунта çакна палăртса хăварассăм килет. Юн пусăмĕ пысăк çынсем тăварлă апат нумайрах çиеççĕ, пĕр пирус туртни те юн пусăмне 30 мм ўстерме пултарать.

Хаçат вулакансене паян çак чиртен эмелсĕр сипленме май пурри пирки асăрхаттаратăп. Мĕн тумалла-ха ăна валли? Халĕ каланă йĕркене юн пусăмĕ пысăккипе аптăракан кашни çын пăхăнсан хăйĕн пурнăçне илемлĕх кĕртме пултарать. Кунта йывăрлăх çук. Малтанах пирус туртма пăрахăр, кĕлетке йывăрăшне чакарассипе ĕçлĕр, апат-çимĕçре тăварпа сахалрах усă курăр, эрех ĕçессине палăрмаллах чакарăр, пахча çимĕçпе тата улма-çырлапа туслашăр, пулă тата тинĕс продукчĕсем ытларах çийĕр, физкультурăпа туслашăр (нумайрах васкаса утăр, эрнере 3 – 4 хутчен шывра ишме тăрăшăр).

Кашни çыннăн хăйĕн юн пусăмне вăхăтран вăхăта тĕрĕслесех тăмалла. Нумайăшĕ çакна тумасть. Çакăн хыçĕнче вара кĕтмен чир-чĕр тăрать те. Тăвансем хушшинче юн пусăмĕ пысăккипе чирленĕ тĕслĕхсем пулсан, çын тĕрĕс мар кун йĕркипе пурăнсан, арçынсемпе хĕрарăмсем 55 тата 65 çултан иртсен, сахăр диабечĕпе чирлесен юн пусăмне тĕрĕслесех тăмалла.

Çын юн пусăмĕ пысăккипе чирлесен унăн врач панă сĕнўсене тата сывату ĕçĕсене вăхăтра пурнăçламалла, кун йĕркине çирĕп пăхăнса пымалла. Çакна валли эмелсене вăхăтра ĕçмелле. Ăна манса каясран эмелсен курупкисем çине асăрхаттарусем çырса хуни, вĕсене куллен усă куракан хатĕрсемпе юнашар упрани ытлашши пулмасть.

Паян пысăк эффективлă препаратсем чылай. Вĕсемпе усă курма сывлăх хуралçисемпе вăхăтра çыхăнмалла, вĕсем патĕнче тăтăш тĕрĕслевре пулмалла.

**И. КОРОЛЬКОВА,**
**районти тĕп больницăн терапи уйрăмĕн ертўçи, кардиолог.**

# Алла-аллăн 50 çул

Юбилей

Алькkăн ашшĕ Михаил, 1918 çулта çуралнăскер, çемье тутине нумаях та ас тивмен. Вăрçă пуçлансан анчах пĕрлешнĕ мăшăрăн тĕвви арăмĕн çийĕнче 3 уйăх çурăра юлнă. Çапла çуралнă Алька, ашшĕне курма тўр килмен ăна.

1942 çулта çуралнă Алькkăн ачалăхĕ пулман тесен те юрать пулĕ. Ачаллах, шкулта вĕреннĕ чухнех колхозра ĕçлеме тивнĕ. Аслисем пекех уйхирте ырми-канми тăрăшнă. Амăшĕ сывлăх енчен хавшак пулнăран 7 класс пĕтернĕ хыççăн вăл урăх шкула каяйман. Ар çулне çитсен те амăшĕ чирлĕ пулнăран салтака илмен ăна.

Альберт колхоз вильăхĕ патне туртăннă, Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхри чăх-чĕп тата сурăх фермисене лашапа апат турттарса панă çĕрте ĕçленĕ. Алькkăн килти пĕтĕм ĕç-пуçа хăйĕн йĕркелесе майлаштармалла пулнă.

– Яшă пулнă вĕт. Ĕнесем сусан, чĕпсене апат парсан Зоя Матвеевăсем патне улаха çўреттĕм. Унта Тушкасси, Кĕçĕн Чураш, Çатракасси ял хĕрĕсем ларма пыратчĕç, – тесе сăмах тăсрĕ Альберт пичче.

Кĕçех Альберта кукашшĕ Елшикран хĕр тупса панă. Килĕшнĕ вара Феоктиста Альбертпа мĕн ĕмĕр вĕçне тухиччен пĕрле утма. Феоктистăн та çамрăклăхĕ вăл вăхăтри ытти яш-кĕрĕмĕн пекех çăмăл килмен. Шкула 4 çул кăна çўренĕ. Çи-пуçĕ пулманнипе, апат-çимĕç çителĕксĕррипе малалла вĕренеймен.

– Ун чухне патшалăха çу, аш-какай, çăмарта памалла пулнă. Начар пурăннăран пирĕн çемье çак парăма парса татайман тесе килте 7 ача пулнине пăхмасăрах пўрт туртса илнĕ. Пирĕн çемье вара арман пўртĕнче нушаланса пурăннă, – тесе халĕ те пăшăрханса аса илет Феоктиста.

Феоктиста колхозра вăй хунă, ĕçчен те сăпайлă хĕре яшсем анчах мар, ват çынсем те куç хывнă. Çавăнпа та пулĕ Альберта кукашшĕ Феоктистăпа паллаштарнă. Кĕçех икĕ çамрăк чĕре пĕр тĕвĕ тĕвĕлет.



Алька хăй пĕччен ўснĕрен-ши, Александровсен çемйинче 9 ача çуралать. Шел пулин те, пĕри ачаллах çут тĕнчерен уйрăлать – шыва путса вилет. Ыттисем, тав Турра, пурте йĕркеллĕ пурăнаççĕ. Халĕ вĕсен 16 мăнук тата 2 кĕçĕн мăнук пур.

Хисеплĕ мăшăр ĕççĕр пачах та ларман. Мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра çĕр ĕçĕпе тимленĕ. Çавăн пекех сысна ферминче те тăрăшнă. Вĕсен ырă ĕçне çўллĕ шая хурса хакланă, «район чемпионĕ» пулнă. Акă сĕтел çине Хисеп грамотисем тухса выртрĕç. Ĕç ветеранĕсем, Аслă вăрçă çулĕсенчи ачасем, çитиçитми пурнăç, выçлăх, ачаллах çĕр ĕçне кўлĕнни, çутă малашлăха шанса ачасем çуратса ўстерни – йăлтах вĕсен шăпи.

Эпир курнă йывăрлăха никам та ан куртăрччĕ, – терĕ мăшăр хире-хирĕç пăхса. Вĕсем çине пăхатăн та тĕлĕнетĕн. Мĕн кăна курман, мĕн кăна чăтса ирттермен пулĕ вĕсем хăйсен ĕмĕрĕнче? Çапах та нимĕнле йывăрлăх та вĕсене çапса хуçайман.

– Ĕçрен ан хăра кăна, вара этем тени яланах вырăнлă, – терĕç мана Александровсем сĕтел хушшинчен хуллен тăнă май.

**Г. АНДРЕЕВА,**
**Анаткасси библиотекин библиотекарĕ.**

Аукцион

## Извещение о проведении открытого аукциона

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики (далее - организатор аукциона) приглашает принять участие в аукционе (далее - аукцион), открытом по составу участников и по форме подачи предложений о цене, на право заключения договоров аренды муниципального имущества, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики.

Основание: постановление администрации Моргаушского района Чувашской Республики № 107 от 12.02.2013 года «О проведении открытого аукциона на право заключения договора аренды муниципального имущества», постановление администрации Моргаушского района Чувашской Республики № 104 от 11.02.2013 года «Об утверждении перечня муниципального имущества Моргаушского района, выставляемого на открытый аукцион на право заключения договора аренды муниципального имущества».

Почтовый адрес, номер контактного телефона, адрес официального сайта организатора аукциона и комиссии по проведению конкурсов или аукционов: 429530, с. Моргауши, ул. Мира, 6 телефон/факс (83541) 62-2-66, 62-5-99, e-mail: http://gov.cap.ru/main/asp?govid=71.

Контактные лица: Захаров И.Н., начальник отдела имущественных и земельных отношений, тел.: 62-2-66

Характеристика объектов аренды:

**Лот №1**: Канализационные сети по ул. Чапаева и Заводская, находящиеся по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, с. Моргауши, проходит по ул. Чапаева и Заводская, Литер: Г уч.1-47; общая площадь – 2596,12 кв.м.; инвентарный номер БТИ-11753.

Начальная цена – 23384 (двадцать три тысячи триста восемьдесят четыре) рубля без НДС.

Сумма задатка – 20% от начальной цены (4676 руб. 80 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной цены (1169 руб. 20 коп.).

Срок аренды – 5 лет.

**Лот №2**: Очистные сооружения, находящиеся по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, с. Моргауши, ул. Набережная, д.20, Литер: А, Г1 старая линия, Г2 новая линия; общая площадь – 623,9 кв.м.; инвентарный номер БТИ-11754.

Начальная цена – 54247 (пятьдесят четыре тысячи двести сорок семь) рублей без НДС. Сумма задатка – 20% от начальной цены (10849 руб. 40 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной цены (2712 руб. 35 коп.).

Срок аренды – 5 лет.

Информация о проведении аукциона:

Перечень документов, представляемых заявителем для участия в аукционе:

1. Заявка на участие в аукционе (в установленной форме) в 2-х экземплярах, с указанием реквизитов счета для возврата задатка. Заявки на участие в аукционе принимаются в кабинете № 312 по рабочим дням по адресу организатора аукциона со дня опубликования данного извещения.

2. Платежный документ (и его копия), подтверждающий внесение заявителем задатка. Задаток перечисляется на реквизиты: Получатель платежа – финансовый отдел администрации Моргаушского района, ИНН 2112001366 КПП 211201001, лицевой счет 05123ЧМ0012 в финансовом отделе администрации Моргаушского района, р/счет: 40302810175025013018 в Чувашском отделении №8613 ОАО «Сбербанк России», кор/счет 30101810300000000609, БИК 049706609. В платежном поручении необходимо указать назначение платежа (адрес участка) и дату аукциона.

Задаток возвращается всем претендентам аукциона, в соответствии с условиями договора о задатке, кроме победителя, в течение 3-х банковских дней со дня подписания протокола о результатах аукциона.

3. Выписка из Единого государственного реестра юридических лиц – для юридических лиц, выписка из Единого государственного реестра индивидуальных предпринимателей – для индивидуальных предпринимателей, копии документов, удостоверяющих личность – для физических лиц.

Заявителем предоставляется опись документов в 2-х экземплярах, один из которых с указанием даты и времени (часы, минуты) приема заявки, удостоверенные подписью уполномоченного лица организатора аукциона, возвращается заявителю.

Срок приема и окончания приема заявок на участие в аукционе – с 08 апреля 2013 года по 13 мая 2013 года.

Организатор аукциона вправе отказаться от проведения аукциона не позднее чем за три дня до даты окончания срока подачи заявок на участие в аукционе.

С документацией об аукционе, в том числе с проектом договора аренды муниципального имущества можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, каб. №312.

Дата, время и порядок осмотра муниципального имущества: по предварительной записи в отделе имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района после публикации данного извещения.

Требования к участникам аукциона:

В аукционе на право заключения договоров аренды муниципального имущества может принять участие любое юридическое лицо независимо от организационно-правовой формы, формы собственности, места нахождения и места происхождения капитала или любое физическое лицо, в том числе индивидуальный предприниматель, претендующее на заключение договора, соответствующие требованиям, предусмотренным документацией об аукционе, и подавшее заявку в установленные сроки на участие в аукционе.

Рассмотрение заявок на участие в аукционе на предмет соответствия требованиям, установленным документацией об аукционе, и определение участников аукциона состоится на заседании Комиссии – 14 мая 2013 года в 15.00 часов по адресу: Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, малый зал заседаний, 3 этаж.

Победителем аукциона признается лицо, предложившее наиболее высокую цену годового размера арендной платы. По итогам аукциона оформляется протокол, который является основанием для заключения договора аренды муниципального имущества. Договор аренды муниципального имущества заключается в срок не позднее 5 рабочих дней со дня подписания протокола.

Время проведения открытого аукциона 16 мая 2013 года (по московскому времени): Лот №1 – 10.00, Лот №2 – 10.30.

Объявления

О внесении изменений в извещение о проведении открытого конкурса на право обслуживания внутрирайонных маршрутов регулярных пассажирских перевозок автомобильным транспортом, организуемых сверх муниципального заказа в Моргаушском районе Чувашской Республики.

Внесение изменений конкурсной документации на сайте администрации района: http://gov.cap.ru/main.asp?govid=71:

«Лот №5 по маршруту «Моргауши–Тиуши» – 18,3 км (с понедельника по пятницу)

Лот №10 по маршруту «Моргауши–Тойгильдино» – 10 км (ежедневно)

Время и место проведения конкурса 10.00 час. 26 апреля 2013 года, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, каб. 206.

Заявки подаются в рабочие дни с 8-00 час. до 17-00 час. (обед с 12.00 до 13.00 час.) с 20 марта 2013 года и до 17.00 час. 25 апреля 2013 года».

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

**Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:101601:780, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.**

**Заказчиком проекта межевания является: Иванова Иустина Филипповна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Ландыши, ул. Цветочная, д. 2.**

**Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru**

**Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:101601:780. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Орининское сельское поселение.**

**С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.**

**Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.**

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

**Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:101601:780, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.**

**Заказчиком проекта межевания является: Любимов Аркадий Иванович, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Ландыши, ул. Восточная, д. 14.**

**Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru**

**Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:101601:780. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Орининское сельское поселение.**

**С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.**

**Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.**

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

**Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:220701:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.**

**Заказчиком проекта межевания является: Ярушин Денис Юрьевич, проживающий по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Б. Хмельницкого, д. 72, кв. 17.**

**Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru**

**Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:220701:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, общей площадью 1,27 га.**

**С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.**

**Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.**

# Пирĕн пата çыраççĕ

## Ĕçлесе тупнă телей



Тивĕшре шкул уçăланпа 120 çул (пĕлтĕр) иртрĕ ĕнтĕ. Шел пулин те, паянхи куна икĕ хутлă капмар та илемлĕ шкул çуртĕнче ачасене урока йыхравласа шăнкăрав сасси янăрамасть.2007–2008 вĕренӳ çулĕнче Тивĕшри вăтам шкултан тĕп шкул хăварчĕç. 2008 çултах вĕренекенсен йышĕ сахал пулнипе шкул хупăнчĕ. Кунта халĕ тăватăмĕш çул ĕнтĕ шкул çулне çитмен ачасен «Незабудка» ача-пăча сачĕ ĕçлет, 20 шăпăрлана пĕрлештерсе тăрать. Ĕç коллективне малтан Тивĕш шкулĕн директорĕнче вăй хунă Вера Федотова ертсе пырать.

Вера Шетмĕпуç ялĕнче нумай ачаллă колхозник çемйинче çуралса ӳснĕ. Пĕчĕк чухне ларатăра пĕлмен, питĕ çивĕч хĕр ача пулнă, вăйăсенче ертсе пыма килĕштернĕ, арçын ачасене те итлеттерме пултарнипе палăрнă. Шетмĕпуçĕнчи тĕп шкулта вĕреннĕ чухнех вăл учитель пулма ĕмĕтленнĕ. Хăйĕн ĕмĕтне пурнăçлас тĕллевпе «5» паллăсемпе вĕреннĕскер Канашри педагогика училищине çул тытать. Вĕренӳ çулĕсем хăвăрт иртеççĕ: кĕçех алла диплом илнĕ çамрăк учитель хăйĕн ĕç биографине Панклири сакăр çул вĕренмелли шкулта «çырма» пуçлать. Çав вăхăтрах ăна аслă пионервожатăй ĕçне те пурнăçлама шанаççĕ. Кунта çулталăк ĕçленĕ хыççăн малалла Шетмĕпуçĕнчи шкулта вăй хума тытăнать. Ĕçрен пушă вăхăтра çамрăк вĕрентекен вырăнти художество пултарулăх коллективне çӳрет, Мичурин ячĕпе хисепленекен хуçалăхра политвĕренӳ йĕркелессипе пропагандист пулса ĕçлеме те вăхăт тупать. Шкулта ĕçленĕ чухне куçăмсăр майпа И.Н. Ульянов ячĕллĕ чăваш патшалăх университетĕн истори факультетне пĕтерет.

1987 çулта Верăпа Тивĕш каччи Анатолий Федотов çемье çăмăртаççĕ. Тепĕр виçĕ çултан Вера Алексеевна Тивĕшри вăтам шкула куçса килет. Пуçламăш классене кунсерен вулама, çырма, шутлама хăнăхтарать, çирĕп пĕлӳ пама тăрăшать. Вăхăт сисĕнмесĕрех шăвать, пурнăç урапи малаллах кусать. Вера Алексеевна çемьене сăвăнăç кӳме икĕ ывăл çуратать: Алешăпа Коля çут тĕнчене килеççĕ. Халĕ ĕнтĕ вĕсем ӳссе çитĕннĕ, шкултан вĕренсе тухнă.

Ĕçри ăсталăхпа пултарулăхне кура Вера Алексеевнăна 2000 çулта директорăн вĕрентӳпе воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ пулма çирĕплетеççĕ. Тепĕр икĕ çултанах вăл директорта вăй хума тытăнать.

Эпĕ, çак йĕркесен авторĕ (1995–2008 ç.ç. Тивĕшри вăтам шкулта ĕçленĕ), Вера Алексеевнăпа пĕр çĕрте ĕçленĕ май вăл коллектива питĕ пуçаруллă ертсе пынине çирĕплетсех калама пултаратăп. Шăпах вăл ĕçленĕ вăхăтра шкула çут çанталăк газĕпе хутса ăшăтасси çине куçарчĕç, спортзала тĕпрен юсаса çĕнетрĕç, шкулти электричество хуçалăхне пушартан сыхланмалли йĕркесемпе килĕшӳллĕн çĕнĕрен улăштарчĕç... Кунсăр пуçне вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче те чылай çĕнĕлĕх алла илтĕмĕр. В. Федотова пуçарнипе шкулта Раççей Геройĕ Е. Борисов ячĕллĕ çарпа патриот клубĕ йĕркеленни те асрах-ха. Пысăк калăпăшлă ĕçсене вăл вăхăтра та тăрăшса пурнăçлатчĕ.

В. Федотова ачалăхран пуçласа паянхи кунччченех халăх хушшинче. Общество ĕçре яланах хастар пулнă. 2005 çулта ăна депутатсен районти Пухăвĕн депутатне те суйланăччĕ. Суйлавçăсен ыйтăвĕсене тивĕçтерес тесе сахал мар вăй хунă. «Ĕçне кура хисепĕ», – тенĕ ваттисем. Вера Алексеевнăн хисепĕ вара тĕрлĕ наградăсем чылай пулнинче кăна мар, ачасен юратăвĕнче те, халăх кăмăлĕнче те.

**П. ЕФИМОВ.**

## Угаровсем – туслă çемье



*Пуш уйăхĕнче Муркашри Культура çуртĕнче художество пултарулăх ушкăнĕсен пысăк коцерчĕ пулчĕ. Вĕсем «халăх» ята çирĕплетрĕç.*

*Çак кун унта республикăри «Пĕрле туслă çемье» конкурс-фестиваль те иртрĕ. Муркаш районĕн чысне Катькас ял тăрăхĕнчи Угаровсен çемйи хӳтĕлерĕ. Угаровсен çемйинчен пурĕ 15 çын сцена çине тухрĕ. Юрларĕç те Угаровсем, ташларĕç те. Жюри хакланипе вĕсем кăçал Республика кунĕнче иртекен уява хутшăнма тивĕçрĕç.*

**Н. КОНДУКТОРОВА.**

## Сывлăхлă пулар, пур пулар!



Пуш уйăхĕн 30-мĕшĕнче Шатракассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта спортпа сывлăх кунĕ иртрĕ.

Вĕренекенсем ирех ашшĕ-амăшĕсемпе шкула савăнăçлă йăл кулăпа утрĕç.

Спортзалта – лăк тулли халăх. Пуçламăш класра вĕренекенсен «Хаваслă ăмăрту» эстафета пулчĕ. Командăра – ачисемпе пĕрле ашшĕ-амăшĕсем. Тĕрлĕ енлĕ интереслĕ конкурссем пулчĕç. Конкурссем хушшинчи тăхтавсенче вĕренекенсем ташă-юрăпа савăнтарчĕç. Ăмăртура пĕрремĕш вырăна «Винни Пух» команда тухрĕ, иккĕмĕш вырăна – «Люкс», виççĕмĕш вырăна – «Çĕнтерӳ».

Вăтам классем хушшинче те «Кам вăйлăрах, хăвăртрах, çăмăлрах» ятпа ăмăрту иртрĕ. Кунта та виçĕ команда хушшинче тупăшу пычĕ. Анчах вăйсем пĕр пек мар. Ку ăмăртура пĕрремĕш вырăна «Хĕвел» команда, иккĕмĕш вырăна – «Максимум», виççĕмĕш вырăна «Туслăх» команда йышăнчĕ.

Кунпа та вĕçленмерĕ-ха спортпа сывлăх кунĕ. Малалла шкул ачисемпе ашшĕ-амăшĕсем волейболла вылярĕç.

Ачасене те, ашшĕ-амăшĕсене те килĕшрĕ пĕрле иртнĕ кун. Жюри членĕ Борис Семенов çапла пĕлтерчĕ: «Ушкăнсем питĕ вăйлă, хак пама та йывăртарах пулчĕ. Ачасен питĕ маттур, спортпа туслă пулни курăнчĕ. Ашшĕ-амăшĕсем те тăрăшсах, хаваспах хутшăнни палăрчĕ». Акă пĕррремĕш класри Даниил Артемьевăн ашшĕ те, амăшĕ те, аппăшĕ те хаваспах ăмăртрĕç эстфетăра. Кун пек мероприятисене тăтăшах иртерсен те ытлашши пулмĕ тесе шутлатăп эпĕ».

Иккĕмĕш класри Ксения Ершовăн ашшĕпе амăшĕ те ăмăртусене хутшăнма кăмăл турĕç. «Ачасем питĕ савăнăçлă, йăл кулă çиçрĕ вĕсен сăн-питĕнче. Ывăннине пăхмасăрах кашни конкурсрах çивĕч, хăвăрт, вăйлă пулма тăрăшрĕç. Вĕрентекенсем хăйсем те конкурссене хутшăнни ачасене хавхалантарчĕ. Мĕн кирлĕ-ха вĕсене тата? Атте-анне, вĕрентекен çумра, пĕрле ăмăртаççĕ, выляççĕ, хавхалантараççĕ, кирлĕ чухне пулăшаççĕ те», – сăмах хушрĕç Олесьăпа Александр Ершовсем.

Сывлăх пурлăхран хаклăрах, сывлăх – чи кирли, тенĕ ваттисем. Айтăр-ха, эпир те, сывлăхлă пулар, пур пулар! Спортпа туслă пулар!

**Шатракасси шкулĕнче вĕренекенсем.**

## Çут çанталăка упрар

Вăхăт иртет, пурнăç хăйне май улшăнсах пырать. Чăваш наци культурине упраса хăварас тĕллевпе шкул программинче кĕçĕн классенчех чăваш йăли-йĕркипе тата авалхи ĕç хатĕрĕпе, чăваш халăхĕн тумĕпе тата юрри-сăввипе паллаштарасси пур. Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта çав программăпа килĕшӳллĕн кĕçĕн класри ачасемпе интереслĕ уроксем йĕркелесе пыма тата аваллăхпа туллин паллаштарма тĕрлĕ майсем туллиех, мĕншĕн тесен пирĕн шкул тата культура центрĕ пĕр çуртра вырнаçнă. Кун пек программăпа ĕçлесе пыма Н. Никольский паллă ăсчахĕн музейĕ пурри тата ку музей ĕлĕкхи япаласемпе пуянни питĕ пулăшать. Вĕренӳ çулĕ вăхăтĕнче ку музейра эпир шкул ачисемпе темиçе хутчен те пулма тăрăшатпăр. Нумаях пулмасть музейра хĕрарăмăн авалхи вăхăтри тата хальхи кун-çулĕ мĕнле улшăннине танлаштарса калаçма пухăнтăмăр. 19–20-мĕш ĕмĕрсенчи хресчен пурнăçне сăнлакан кил тавращĕнчи хатĕрсемпе тĕплĕн паллашма кĕçĕн класри ачасене уйрăмах кăсăклă пулчĕ.

Кăçалхи çул тавралăха хӳтĕлемелли çулталăк пулнă май музей çумĕнчи «Шур аппасем» клуба хутшăнакан аслă çулхи хĕрарăмсем йĕркелесе панă типĕтнĕ эмел курăкĕн куравĕпе паллашма тӳр килчĕ. Ачасем тĕрлĕ ырă шăршăллă типĕтнĕ ӳсен-тăранпа тĕплĕн паллашрĕç. Татьяна Зиновьевна пире çак ӳсен-тăрансемпе тата Н. Никольский хăй вăхăтĕнче çынсене епле сиплени питĕ интереслĕ, тĕплĕн ăнлантарса пачĕ: «Николай Васильевич виçĕ аслă пĕлӳ илнĕ çын пулнă. Халăх йăли-йĕркине тĕпченисĕр пуçне халăх медицинин уссине аван пĕлнĕ. Мĕншĕн тесен вăл Хусанти ял хуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухнă, аслă пĕлӳллĕ агроном дипломне алла илнĕ. Çулсеренех ялти пахчара, садра 360 тĕслĕ ӳсен-тăран пăхса ӳстернĕ. Çав эмел курăкĕсемпе туллин усă курнă, ял çыннисене яланах пулăшма тăрăшнă».

Калаçăва пĕтĕмлетсе вăл ачасемпе викторина ирттерчĕ. Çĕнтерӳçĕсене çуркунне акма чечек вăррисем парнелерĕ. Хам та ачасене Н. Наумов çырнă «Халăх çӳпçинчен» этнографи ăнлавĕсен пуххипе паллаштартăм. Пирĕншĕн, вĕрентекенсемшĕн, кун пек уроксем вырăнлă пулнине туйса тăратăп.

Музейран тухсан эпир кĕçĕн класс ачисемпе «Çут çанталăк çӳпçинче – тăван ен чи илемли» темăпа йĕркеленĕ ӳкерчĕксен куравне пахаларăмăр. Ку курава йĕркелеме Муркашри искусство шкулĕнче ĕçлекен С. Цветкова тăрăшнă. Ку курав та ачасене çут çанталăк илемĕпе паллашма май парать. Ăна упрамалли çинчен калаçма май тупăнать.

Пуçламăш класс ачисене чăваш халăхĕн пурнăçĕпе пĕчĕкренех паллаштарса пыни питĕ вырăнлă тесе шухăшлатăп, малашне те çак ĕçе аталантарса пырас тетпĕр.

**А. БЕЛОВА,**
**Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулти пуçламăш класс учителĕ.**

## Кĕркунне

*(Пĕр сас паллирен пуçланакан сăмахсемпе çырнă калав)*

Кулине кукамай кăмпана кайрĕ. Кукаçи кăмпана каймарĕ. Килте Кĕркури куккапа кишĕр, кăшман кăларчĕ, кайран купăста касрĕ.

Каçалапа Кулине кукамай киле килчĕ. Карçинккари кăрăçсене кукаçипе куккана кăтартрĕ. Кукаçи карçинккари кăмпасене кăмăлларĕ.

**Л. БЛИНОВА,**
**Атапай шкулĕнче 6 класра вĕренекен.**

## Ачасене тĕрĕс-тĕкел çитĕнтересчĕ

Пурнăç никĕсĕ тата пуласлăхĕ ачасенче тетпĕр. Вĕсен пурнăçĕпе сывлăхне упраса хăварасси вара, тĕпрен илсен, аслисенчен килет.

Паянхи кун ачасене тĕрлĕ синкертен асăрханма хăнăхтарасси тата тĕрлĕ лару-тăрура хăйсене тĕрĕс тытма вĕрентесси ачасене воспитани парас ĕçре нихăçанхинчен те çирĕп тухса тăрать.

Синкер лару-тăру е хăрушлăх ачана кашни утăмра, çулталăкăн кирек хăш тапхăрĕнче те «шыраса тупма» пултарать. Калăпăр, çуллахи янкăр кун çил-тăвăллă аслати кĕмсĕртетсе килет е хитре чечекпе киленнĕ вăхăтрах пыл хурчĕ сăхма пултарать. Сивĕ хĕл кунĕнче шăнса пăсăлас, çулсем пăрланса ларсан ӳксе суранланас хăрушлăх пур. Юлташсемпе вылянă хушăрах тата пачах та палламан çын астарса çавăтса кайма е машинăпа ларттса кайма та пултаратьçке-ха. Кунсăр пуçне тата ача хăйне тивĕçлĕ тытманни те темĕн тĕрлĕ синкерлĕх патне илсе тухма пултарать: шăрпăкпа выляни пушар патне çитерет, çул çинче хăрушсăрлăх правилисене пăхăнманни – инкек патне. Мĕн чухлĕ хăрушлăх...

Ачасемпе инкек ан тухтăр тесе эпир «Солнышко» ача-пăча садĕнчи аслă ушкăнра калаçу чылай ирттеретпĕр. Ачасемпе пĕрле вăл е ку тĕслĕхсене сӳтсе явса тĕрĕс мĕнле тумаллине ăнлантаратпăр. Вĕсене çак калаçусем питĕ интереслентереççĕ. Çавăнпа та эпир тăрăшнине пăхмасăрах ашшĕ-амăшĕсене те хăйсен ачисемпе çак темăпа ытларах калаçма сĕнес килет. Çакă ачасене тĕрĕс-тĕкел çитĕнтерме пулăшĕ тесе шутлатпăр.

**Е. КРОЛИКОВА,**
**В. ЯСТРЕБОВА**
**воспитательсем.**

# Преступленисене çийĕнчех уçса параççĕ

**Паян – Следстви подразделенийĕсем йĕркеленнĕ кун**



«Вăрăн тĕрмере лармалла», – тет «Место встречи изменить нельзя» кинофильм геройĕ Глеб Жеглов. Анчах çав вăрăна малтан шыраса тупмалла. Çак тĕллевпе СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Указĕпе 1963 çулхи ака уйăхĕн 6-мĕшĕнче йĕркеленнĕ те ĕнтĕ Раççейри Шалти ĕçсен министерствин тытăмĕнчи следстви пайĕ. Çак кунран шалти ĕçсен органĕсенчи следстви аппарачĕ кун çути курнă.

Преступленисене уçса парассипе иртнĕ ĕмĕрсенче епле ĕçленине истори страницисенчен курма пулать. 1860 çулччен преступленисене уçса парассипе хула тата земство полицийĕсем ĕçленĕ. Преступление уçса парасси ун тĕлĕшпе хирĕçлеме çук çирĕплетÿсем тупса палăртса айăплă çынна саккун умĕнче явап тыттарассипе çыхăннă пулнă. Следовательсен статусне çĕклесси 1862 çулхи авăн уйăхĕн 29-мĕшĕнче çирĕплетнĕ тĕп йĕркесемпе пурнăçа кĕрсе пынă.

Малтанхи вăхăтра юстици министерстви сĕннипе следовательсене император хăй çирĕплетнĕ. Суд следователĕ пулма аслă юридици пĕлĕвĕ илнĕ тата суд ĕçĕ-хĕлĕпе 3 çултан кая мар ĕçленĕ çын çеç тивĕç пулма пултарнă. Следователĕн тĕп тивĕçĕ вăл е ку преступленире айăплисене пĕр шелсĕр тупса палăртасси шутланнă.

Çулсем иртнĕ май следствипе суд ĕçĕ тĕпрен улшăнса çĕнелнĕ, анчах преступление уçса парса айăплă çынна саккун умĕнче явап тыттарасси следовательсен ĕçĕ-хĕлĕн шăнăрĕнче упранса юлнă.

Паян çак тытăмри юлашки улшăнусем 50 çул тултараççĕ. Апла пулсан Раççейри следстви органĕсене те – çур ĕмĕр. Çак хушăра ЧР Шалти ĕçсен министерствин Муркаш районĕнчи пайĕн следователĕсем те ĕçсĕр лармарĕç. Хăйсен ĕçне ответлăха туйса пурнăçланăран вĕсем те хамăр енри йĕркелĕхе сыхласа хăварассине пысăк тÿпе хывреç. Нумайăшĕн ячĕ паян та асра. Ю. Соловьев, В. Илугин, В. Абрамов, Э. Венедиктов, В. Григорьев, В. Ляченков, З. Можарова, Р. Тимофеев тата ытти следовательсем хăйсен ĕçне ответлăха туйса пурнăçланине районта пурăнакансем халĕ те астăваççĕ.

Районти шалти ĕçсен пайĕнче следстви уйрăмне йĕркелесен ăна тĕрлĕ çулсенче В. Илугин, В. Сорокин, В. Лобастов, К. Петров ертсе пынă.

Кĕске сăмах Константин Петров пирки. Ачалăхрах обществăлла йĕркелĕхе юратнă Вăрнар каччи Афганистан Республикинче тивĕçлĕ çар службине иртнерĕ хыççăн Екатеринбургри Р. Руденко ячĕллĕ юридици институтĕн следствипе криминал факультетне вĕренсе пĕтерет. Алла диплом илнĕ хыççăн çамрăк специалист Муркаш районне ĕçе вырнаçать.

Следователь, аслă следователь, следстви пайĕн пуçлăхĕ – çак çулсемпе утса тухать вăл тивĕçлĕ канăва тухиччен. Ĕçри хастарлăхпа черетсĕр звани илни те, район тата республика шайĕнче чыслани те пĕрре мар пулнă унăн ĕç пурнăçĕнче. 2007 çулта ăна ЧР ШĔМ приказĕпе «Чи лайăх следователь» паллăпа наградăланă. Çакна та каласа хăвармалла, К. Петров следстви уйрăмне 13 çул ытла ертсе пынă. Следстви органĕсенчи пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ 21 çул ытла. Çак хушăра нумай çамрăка çăмăл мар ĕçе хăнăхтарнă вăл, хăйĕн ĕç опычĕпе паллаштарнă.

Константин Иванович следстви пайĕн иртнĕ çулĕсене пĕлнипе пĕрлех кунти паянхи ĕçченĕсемпе те çыхăну çухатмасть. Вĕсен ĕçри йывăрлăхĕсемпе, тунă ÿсĕмĕсемпе паллашсах тăрать, кирлĕ сĕнÿсем парать.

Паян следстви уйрăмĕн ертÿçи – Иван Васюхин. Унпа пĕрле çак ĕçре пысăк опыт пухма ĕлкĕрнĕ Лира Рузмикина, Павел Павлов, Елена Круглова, Ольга Николаева, Алексей Чернов следовательсем тăрăшуллă ĕçлесе пыраççĕ. И. Васюхинпа П. Павлов иртнĕ çулсенче «Чи лайăх следователь» паллăна тивĕçнĕ.

**А. ПЕТРОВ.**

**Сăн ÿкерчĕкре: следстви уйрăмĕн хальхи коллективĕ.**

**Предприяти аталанăвĕ**



## Ырă тĕслĕхре

***Сăн ÿкерчĕкре эсир акционерсен «Шупашкарти «Сеспель» хупă обществин Москакассинче вырнаçнă производство лаптăкĕнче оператора тăрăшакан Михаил Садовникова куратăр. Тăрăшуллă ĕçчен кунта 2009 çултанпа тимлет. Пысăк ăсталăх туптама ĕлкĕрнĕ специалист – ырă тĕслĕхре.***

***Асăннă предприяти январь – февраль уйăхĕсенче 278 миллион та 110 пин тенкĕлĕх продукци реализациленĕ. Иртнĕ çулхи çак тапхăрти кăтарту вара 266 миллион та 263 пин тенкĕлĕх пулнă. Хатĕр продукци хисепĕ ÿсĕмлĕ. Кăçалхи икĕ уйăхра 191 цистерна ăсталанă, иртнĕ çул 137 пулнă. Çапла вара «Сеспель» аталанăвĕ куç умĕнче.***

**Р. ИЛЛАРИОНОВА сăн ÿкерчĕкĕ.**

**Редакци почтинчен**

## Халăх йăли-йĕркине упраса

Ытти çĕрти пекех Йÿçкасси ял тăрăхĕнче пурăнакансем те Çăварни уявне пысăк йышпа хаваслăн иртерчĕç. Хĕлĕн юлашки кунĕсемпе сыв пуллашакансем Вăрманкассинчи Культура çурчĕ çумĕнчи лаптăкра пухăнчĕç. Уява юрă-кĕвĕ, шÿт-камит, спорт вăййисем, салам сăмахĕсем, конкурссем илемлетрĕç. Салху та пусăрăнчăк кăмăл кунта самантрах сирĕлчĕ. Тĕрĕссипе каласан вара кун пек хаваслă уяв пулманах, вăл пирĕн асăмра чылайччен упранĕ.

**А. АЛЕКСЕЕВА.**

Вăрманкасси ялĕ.

# «Ыйтусене вăхăтра татса пама пулăшатпăр»

***Рынок хутшăнăвĕнче çынсен ĕçлеслĕхĕ тăтăшах тĕрĕслевре. Çакăнта хăшĕсем авăра анса каяççĕ пулсан, теприсем аталану тÿпине хăпараççĕ. Кунта «çÿлтисен» пулăшăвĕ çук. Кам хăйĕн ĕçĕпе халăха ытларах тивĕçтерет – унăн аталанăвĕ те сулмаклă утăмсемпе малалла утăмлать. Çак сăмахсене 12 çул каялла Муркашра çĕр виçессипе, халăха çĕр планĕсем туса парса çав лаптăксене кадастр учетне тăратма пулăшассипе ĕçлеме пуçланă «Аршин» чикĕллĕ яваплăхлă общество пирки те калама пулать. Унăн директорĕ Алексей КОЛЬЦОВ тăрăшнипе общество тăтăшах шыравра, аталанура. Халăхра ырă ята тивĕçнĕ общество директорне паян хаçат тĕпелне калаçăва чĕнтĕмĕр.***

**«Аршин» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра**



**– Алексей Валериевич, калаçăвăмăр пуçламăшĕнче хăвăр обществăн тĕп ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарăр-ха?**

– Чăн малтанах пире калаçăва чĕннĕшĕн пысăк тав. Рынок тытăмĕнче эпир 2001 çултанпа ĕçлетпĕр. Хамăр ĕçе çĕрсене виçессипе пуçларăмăр та паян районта пурăнакансен çĕрпе, пурлăхпа тата харпăрлăхпа çыхăннă тĕрлĕ ыйтăвĕсене вăхăтра тата пахалăхлă татса парассипе тимлесе пыратпăр. 12 çул ытла эпир çынсем валли çĕр документне (межевой план) кадастр учетне тăратма хатĕрлерĕмĕр. Ку ĕçе эпир паян та хамăр аларан вĕçертместпĕр. Ял çыннисем валли пай çĕрĕсем, килти хушма хуçалăха аталантарма пăхнă 60-шар соткăсем, килти хушма хуçалăх çĕрĕсем, садпа дача участокĕсем т. ыт. те тĕлĕшпе кирлĕ документсене кĕске вăхăтра хатĕрлесси те – пирĕн ĕç. Кунпа пĕрлех эпир электричество линийĕсем йышăнакан çĕрсене, шыв плотинисене, кÿлĕсене т. ыт. те виçессипе ĕçлетпĕр. Хамăр аталанса пынă май паян эпир çак ĕçсене районта çеç мар, унăн тулашĕнче те, ытти регионсенче те пурнăçлама хатĕр. Ăна пурнăçлама пирĕн предприятире аттестаци витĕр тухнă 5 кадастр инженерĕ ĕçлет. Хамăр ĕçсене пурнăçлама пирĕн ăста специалистсемпе пĕрлех техника хатĕрĕсем те ытлă-çитлĕ. Çакна районта пурăнакансем сисрĕç пулас – пирĕн патăмăрта клиентсен йышĕ чакмасть.

**– Юлашки çулсенче ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртесси пирки, ял çыннисене тивекен пай çĕрĕсене харпăрлăха куçарасси çинчен нумай калаçаççĕ. Çак ĕçе хăвăртлатассипе чылай ĕç туса иртереççĕ. Сирĕн обществăн кунти вырăнĕ еплерех?**

– Кунта манăн юлашки вăхăтра пурнăçа кĕнĕ çĕнĕлĕхсем çинче чарăнса тăрас килет. Çакна хаçат вулакансем те пĕлме тивĕç тесе шутлатăп. Эпир çĕр виçсе хатĕрленĕ планпа кадастр палати сире çĕр участокĕн кадастр паспортне парать. Çакнашкал ĕç-хĕл çĕрпе çеç мар, пурлăхпа та çыхăннă. Эпир хатĕрлесе панă техникăлла планпа кадастр палати çурт-йĕрĕн кадастр паспортне парать. Кадастр учетне тăратсан тата кадастр паспортне алла илсен эсир регистраци палатине кайса хăвăр пурлăха регистрациленĕ çинчен калакан свидетельствăна илетĕр. Çак ĕçсене туса иртнĕ хыççăн тин эсир çав пурлăхăн саккунлă хуçи пулса тăратăр. Асăрхарăр пулĕ, кунта пирĕн ĕç-хĕл – пуçламăш çул-йĕр. Çакна ăнланса эпир хамăр патăмăра килекен граждансене пачах та кĕттерместпĕр тесен те юрамалла.

Юлашки вăхăтра ĕçе кĕнĕ тепĕр çĕнĕлĕх пирки те каласа хăварам. Ялта пурăнакансемшĕн вăл интереслĕ пуласси пирки иккĕленÿ çук. Саккунсем улшăннă май ялсенче паян кивĕ çурт вырăнне çĕннине тăвас тесен малтан кивĕ çурт-йĕре тĕрĕслеттересе кадастр учетĕнчен кăлармалла. Çавăн хыççăн çеç эсир кивĕ пÿрте сÿтсе ун вырăнне çĕнĕ çурт лартайратăр, ун тĕлĕшпе техплан илейретĕр.

**– Иртнĕ çулхи раштавăн 1-мĕшĕнчен вăя кĕнĕ çĕнĕлĕхсем сире те пырса «çапрĕç-и»?**

– Тÿрременех пырса тиврĕç. Вăл çĕнĕлĕхсемпе килĕшÿллĕн пирĕн ĕç те хушăнчĕ. Анчах эпир вĕсене пурнăçлама хатĕр. Çĕнĕлĕхсем пурнăçа кĕнĕ хыççăн тăвата уйăх ĕнтĕ эпир пурăнмалли çуртсемпе производство сооруженийĕсем, хваттерсемпе уйрăм çынсен килĕсем, килти хушма хуçалăхри хуралтăсем тĕлĕшпе техплансем туса пама пулăшатпăр. Малтан çак пурлăх валли техпаспорт кирлĕ пулнă пулсан, малалла тивĕçлĕ органсем техплан ыйтма пуçлаççĕ. Мĕнре-ха уйрăмлăхĕ? Техпаспорт çинче вăл е ку пурлăхăн çирĕплетнĕ координачĕсем çук. Малашне вара вĕсем ятарлă системăра пулĕç. Техпланпа çурт-йĕр çĕр участокĕн хăш вырăнĕнче ларни тĕп-тĕрĕс паллă. Манса каясран. Техпаспортпа сирĕн пурлăха никам та учета тăратмасть.

**– Паян сутас-илес ĕç анлă сарăлчĕ. Çурт-йĕр тĕлĕшпе те вăл иккĕмĕш вырăнта мар. Вăл е ку çурт тĕлĕшпе виçтерсе тунă план пулсан çурта туянаканăн ăна хăй ячĕпе татах тутармалла пулать-и?**

– Çук. Саккунпа килĕшÿллĕн виçтерсе тунă плана (межевой план тетпĕр) пĕрре тунă пулсан харпăрлăх хуçи улшăннине пăхмасăрах ăна урăх тутармалла мар. Анчах. Дача амнистийĕпе лаптăксене, пурлăха виçтермесĕрех регистрациленисен те пурăна-киле çак ĕçе пурнăçламаллах пулать.

**– Алексей Валериевич, хăвăрăн иртнĕ çулхи ĕçсен пĕтĕмлетĕвĕпе паллаштарăр-ха, тархасшăн.**

– Вăрттăнлăх çук. Иртнĕ çул пирĕн кадастр инженерĕсем 500 ытла çĕр планĕсем хатĕрлерĕç. Техплан ĕмĕрĕ пуçлансан 4 уйăхра çеç 98 техплан хатĕрлерĕмĕр.

Юлашкинчен манăн хаçат вулакансене çакна калас килет. РФ Президенчĕ хваттерсене приватизацилемелли тапхăра татах икĕ çула тăсрĕ. Çак вăхăт та хăвăрт иртсе кайĕ. Çавăнпа та хваттерсем тĕлĕшпе техплансене хальтерех тусан ку ĕç пур еншĕн те вырăнлă пулĕ.

**А. БЕЛОВ**
**калаçнă.**

